# Кил тата хушма хуҫалăх



## Вĕтĕ пăтапа ĕҫлеме

Килти хушма хуҫалăхра юсав ĕҫĕсемсĕр пулмасть. Меллĕ мар вырăнта вара вĕтĕ пăтана ҫапса кĕртме питĕ кансĕр. Ун пек чух эпир сире пластилин чăмаккипе усă курма сĕнетпĕр. Пĕр-икĕ хут мăлатукпа шакканă хыҫҫăн, пăта «сыпҫăнсан», пластилин чăмаккине илмелле.

Выльăх усракана – ҫĕнĕлĕх

## Ĕнене киле пырса пĕтĕлентерĕҫ



*Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен Н. Яковлев ертсе пыракан районти станци коллективĕ хăйĕн ĕҫне пурнăҫ ыйтнипе пĕр утăмра илсе пырса ҫĕнĕлĕхсенчен самантлăха та юлмасть. «Хресчен туса илнĕ уй-хир продукцийĕ выльăх витĕр кăларсан кăна ытларах тупăш парать. Ҫакна ăнланакан ял ҫынни ҫĕр-шыв экономикинчи йывăрлăхсемпе кĕрешсе килти хушма хуҫалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет, умри тĕллевĕсене пурнăҫлама ҫемье бюджетне тĕреклетет», – тет Николай Семенович. Ҫĕнĕлĕхсемпе пĕр ҫыхăнура пыракан коллектив ял ҫыннисене пулăшу парас тĕллевпе иртнĕ кунсенче вĕсем патне киле пырсах ĕнесем пĕтĕлентерес ĕҫе ҫул пачĕ. Асăннă ҫĕнĕлĕх хаҫат вулакансемшĕн интереслĕ пулнине шута илсе ĕнесене килсене тухса искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе ĕҫе пуҫăннă операторпа Светлана Юрьевна ГАВРИЛОВĂПА тĕл пулса калаҫрăмăр.*

**– Хăш-пĕр ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсем панкрута тухнăран ял ҫыннисемшĕн килти хушма хуҫалăхри ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентересси пысăк ыйту пулса юлчĕ. Мĕнле татса пама пулать-ха ăна?**

– Паянхи куна выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ĕнесене ятарлă специалист киле тухса пĕтĕлентерессине пурнăҫлама куҫса ҫӳрекен пункт йĕркелерĕ. Ку ĕҫе туса пыма мана шанчĕҫ. Унсăр пуҫне ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе Ҫатракассинчи ветеринари участокĕнче, Турайри участокри ветлечебницăра ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсенче ĕҫсене пысăк пахалăхлă пурнăҫлама пур хатĕрсем те ҫителĕклĕ, ĕнесене пĕтĕлентерессипе те опытлă специалистсем ĕҫлеҫҫĕ. Пирĕн паянхи тĕллев – ялсенчи килти хушма хуҫалăхри пур ĕнене те искусствăлла майпа пĕтĕлентересси. Танлаштарма, иртнĕ ҫул ял ҫыннисен килти хушма хуҫалăхĕсенчи 7415 пуҫ ĕнерен 2098 пуҫне кăна искусствăлла майпа пĕтĕлентернĕ.

**– Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерни вăкăрсемпе пĕтĕлентернинчен?**

– Тĕрĕс ыйту хускатăр. Шăпах ҫакăнти уйрăмлăхсене пĕлменрен ĕнесене вăкăрсемпе пĕтĕлентерни ар ҫыхăнăвĕ урлă сарăлакан чирсене ҫул парать, килти хушма хуҫалăх тытакансене чирленĕ ĕнесене сыватас тĕлĕшпе пысăк тăкак кӳрет. Ҫакă пулас пăрăвăн сывлăхĕн аталанăвĕ ҫине те витĕм парать. Ҫав вăхăтрах ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентернин тĕллевĕ – кашни ĕнене пăрулана хыҫҫăнхи пĕрремĕш уйăхрах тухăҫлă пĕтĕлентерсе хăварасси, ĕнесем хĕсĕр юласран сыхланасси. Практика кăтартнă тăрăх ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерсен общественăлла секторта та, килти хушма хуҫалăхра та пăру илессипе кăтартусем япăх мар. Кун пек чух селекципе ăратлăх ĕҫĕ те ӳсĕллĕ шайра пулса пыраççĕ. Апла пулсан выльăхсен паха енĕсене малалла аталантарма ҫул уҫăлать. Ку вара – хушма тупăш.

**– Эсир ял ҫыннисем патне килсене тухса хушма хуҫалăхсенчи ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерме мĕнле вăрлăхпа усă куратăр? Выльăхăн ăратлăх пахалăхĕ пирки калаçма пулать-и кунашкал чух?**

– Ял ҫыннисен ĕнисене киле тухса искусствăлла майпа пĕтĕлентерме эпир хура-шурă ăратлă вăкăрсен вăрлăхĕпе усă куратпăр. Тĕрĕсленĕ ҫак вăрлăха эпир ăратлăх ĕҫĕпе тимлекен «Чувашское» уҫă акционерлă обществăра туянатпăр. Паянхи кун ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерме ҫак вăкăрсен вăрлăхĕпе усă куратпăр: а) хура-шурă ăратлă вăкăр. Унăн амăшĕ ҫулталăкне 9165 килограмм сĕт панă тата сĕтри ҫу хисепĕ 3,62 процентлă пулнă; б) амăшĕ ҫулталăкне 10538 килограмм сĕт панă тата сĕтри ҫу хисепĕ 3,83 процентлă пулнă вăкăр.

**– Ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессин технологийĕпе тата ҫак ĕҫĕн хакĕпе паллаштармăр-ши?**

– Ял ҫыннишĕн чи кăсăклă ыйту ҫакă пуласса ăнлантăм. Анчах кунта хуравĕ те кашниншĕнех интереслĕ пуласса шанатăп. Ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессине ирпе тата каҫпа пурнăҫлатпăр. Ҫакна пĕрре пурнăҫлама 950 тенкĕ. Енчен те пĕрремĕш пĕтĕлентерӳ тухăҫлă пулмасан иккĕмĕш хут оператора чĕнни – тӳлевсĕр. Кунсăр пуҫне ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентернĕшĕн ял ҫынни тӳснĕ тăкакăн 70 процентне республика бюджечĕ саплаштарнине шута илмелле. Пирĕнпе ĕҫлеме кăмăл тунă ял ҫыннин ҫакна валли инҫе ҫула тухмалла пулмасть. Килти хушма хуҫалăх хуҫисен киле ĕне пĕтĕлентерме пынă осеменаторпа субсиди илме заявлени ҫырмалла пулать. Ун ҫумне ветеринари услугисемшĕн укҫа тӳленине ҫирĕплетекен квитанци копине хумалла. Ыйтса ҫырнине оператор хăех тивĕҫлĕ вырăна ҫитерет. Вăхăт нумаях та иртмĕ – ĕнене искусствăлла майпа пĕтĕлентернĕшĕн тивекен субсиди сирĕн перекет кĕнеки ҫине куҫĕ.

**– Питĕ кăмăллă, анчах сирĕнпе епле ҫыхăнмалла? Тата сире илсе ҫӳресси епле йĕркеленнĕ?**

– Килти хушма хуҫалăхсенчи ĕнесене е тынашкасене пĕтĕлентерме вăхăт ҫитсен тата ҫак ыйтăва татса пама йывăрлăхсем тухса тăрсан пирĕн патăмăра пĕр тăхтаса тăмасăр ҫак телефонпа шăнкăравлама пултаратăр: 8-960-300-47-60. Пирĕн калаҫу сирĕн ыйту ҫине тĕрĕс хурав тупма пулăшĕ. Ялсене вара эпир хамăр транспортпах ҫула тухатпăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Пĕлес тенĕччĕ

## Путене – усăллă кайăк

**Юлашки вăхăтра хушма хуҫалăхра путене усракан йышланчĕ. Мĕнпе усăллă-ши вăл, тен хăшĕ-пĕри ăна илемĕшĕн кăна усрать. Ҫак кайăк пирки эпĕ сирĕн хаҫат урлă тĕплĕнрех пĕлес тенĕччĕ.**

**Н.ПЕТРОВ.**

Тĕрлĕ апат-ҫимĕҫ хатĕрленĕ ҫĕрте путенен ашĕпе тата ҫăмартипе анлă усă кураççĕ. Вĕсем уйрăмах ачасемшĕн, апат тиркекенсемшĕн, чирлĕ ҫынсемшĕн усăллă. Путенен ҫăмарти уйрăмах сиплĕ шутланать. Ҫавăнпа та Япони правительстви шкул ачисен ăс-тăнне лайăххах аталантарма ирхи апат вырăнне вĕсене икĕ ҫăмарта ҫитерме сĕннĕ. Ăма кайăк 110 грамм чухлĕ таять, аçи вара – 150 грамм. Путенен ăрачĕ чылай. Ҫапах та япони ăрачĕ анлăрах сарăлнă, вăл 40 – 45 кунтан ҫăмарта тума пуҫăнать, пĕр ҫулта 10 – 12 грамм йывăрăшлĕ 300 – 340 ҫăмарта тăвать. Путене ҫăмартине туса илесси чăххăпа танлаштарсан йӳнĕрех ларать. Ҫавăн пекех унта кали, тимĕр, фосфор, кобальт, В1, В2 тата ытти витаминсем чăххă ҫăмартинчинчен нумайрах. Хăш-пĕр ҫыннăн чăх ҫăмартине ҫисен аллерги пулать. Ҫавăн йышшисене путене ҫăмартине ҫиме сĕнеҫҫĕ. Тухтăрсем ӳссе ҫитнĕ ҫынна кунне 4–6, ачана 2–3 ҫăмарта ҫиме сĕнеҫҫĕ. Ăма кайăк аçасăр та ҫăмарта аванах тăвать, ҫапах та ăна мăшăр кирлех.

Путене килте ĕрчетме шутлатăр пулсан 1 – 1,5 уйăхри чĕпĕ туянăр. Мĕншĕн тесен ҫак ӳсĕмри кайăк ҫĕнĕ условие аванрах хăнăхать. Вăл ытлашши начар та, самăр та пулмалла мар. Сывă кайăк пĕр тикĕссĕн сывлать. Вăтам ҫемьере 3 – 4 ама, 1 аҫа пулмалла. Читлĕх 20 – 25 сантиметртан ҫӳллĕ пулмалла мар. Енчен те сирĕн читлĕх ҫакăнтан ҫӳллĕрех пулсан маччана фланель йышши пусма ҫапса парăр. Путене ҫӳлелле вĕҫсе хăпарать, пуҫне амантма пултарать. Айсарăм вырăнне хаҫат, йывăҫ кĕрпи, улăм каять. Путене валли 17 – 20 сехет чухлĕ кун ҫути кирлĕ. Сывлăш температурине 16 градусран чакармалла мар. Эрнере ăна пĕр хутчен кĕл ваннăйĕ туса памалла. Ҫакă тĕрлĕ чир-чĕре хирĕҫ кĕрешме пулăшать.

Ăна кунне виҫĕ хутчен, пĕр вăхăтра ҫитерме тăрăшмалла. Пĕр кунта пĕр путенене 25 – 30 грамм чухлĕ апат кирлĕ. Ытлашши самăртнă кайăк ҫăмарта япăх тăвать. Путене апат тиркемест. Ун патĕнче яланах вĕтĕ чул е хăйăр пулмалла. Ăна вĕретсе сивĕтнĕ шыв памалла.

Кайăка пусма хатĕрлес умĕн ҫутă ытлашшиех кирлĕ мар, ăна ытларах апаталантарма тăрăшмалла. Аҫана 56 – 63 кунтан, амана 11 – 12 уйăхран пусма юрать. Шел пулин те путене килти условисенче чĕпĕ кăлармасть. Ăна валли инкубатор кирлĕ. Унти сывлăш температури 37,5 – 38,5 градус пулмалла, 65 – 75 процент чухлĕ нӳрĕк кирлĕ. Тĕрĕс вырнаҫтарнă ҫăмартаран 17 талăкран 6 – 8 грамм йывăрăшлĕ чĕпĕ тухать. Тепĕр 3 сехетрен вăл 20 сантиметр ҫӳллĕш сикме пултарать, хăвăрт ҫитĕнсе аталанать. Пĕрремĕш тухнă чĕпĕпе юлашки чĕпĕ хушши 5 – 6 сехет чухлĕ пулать. Чĕпĕ валли малашне 35 – 38 градус ăшă кирлĕ. Икĕ уйăх хушшинче унăн йывăрăшĕ 20 грамм, чăх чĕппин вара 14 хут ӳсет.

**В. ИЛЬИН,**
**выльăх тухтăрĕ.**

Кăтартусем

## Килти хуҫалăхра

Официаллă кăтартусене ĕненес пулсан пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне район ҫыннисен килти хушма хуҫалăхĕсенче майракаллă шултра выльăх хисепĕ 10710 пуҫ (районти пĕтĕм хисепĕн 65,7 проценчĕ) пулнă. Вăл шутран 7415 пуçĕ – ĕнесем (район территорийĕнчи пĕтĕм ĕнесен 76,7 проценчĕ). Хĕл вĕҫленнĕ тĕле килти хушма хуҫалăхсенче пурĕ 2090 пуç (районти пĕтĕм хисепĕн 18 проценчĕ) сыснасем, 10416 пуç (98,7 процент) сурăхсемпе качакасем, 46,2 пин пуç (14 процент) чăхчĕп шутланнă.

Нарăс уйăхĕнче килти хушма хуҫалăхсем 250,4 тонна аш-какай, 2821,1 тонна сĕт, 622,6 пин штук ҫăмарта туса илнĕ. Килти хушма хуҫалăхри кашни ĕне талăксерен вăтамран 13,5 килограмм сĕт антарнă.

Районта туса илекен пĕтĕм аш-какайăн 61,5 проценчĕ, сĕтĕн 80,7 проценчĕ килти хушма хуҫалăхсен тӳпи.

**Хамăр инф.**

Пӳлĕмри чечек

## Фиалка

**Эпĕ фиалка чечекне питĕ кăмăллатăп, кантăк сулли ҫинче тĕрлĕрен сорт ĕрчететĕп. Чечеке тĕрĕссех пăхнă пек туйăнатчĕ, анчах та вăл хавшанине туйма пуҫларăм, ҫулҫисем пĕтĕрĕнсе ларнине тата сарăхнине асăрхарăм.**

**Н. ПЕТРОВА.**

Фиалка чечекне тепĕр майлă сенполи теҫҫĕ. Вăл ҫавра ҫулҫăллă, 30 сантиметр ҫӳллĕш ӳсекен тĕрлĕ тĕслĕ ҫурăлакан чечек. Унăн сорчĕ питĕ нумай.

Ҫуллахи шăрăх кунра ăна хĕвел ӳкмен ҫĕре лартмалла, унсăрăн ҫулҫă хĕвелпе пиҫсе кайĕ. Сенполи ҫăмăл тăпрана кăмăллать, ытлашши шăварнине кăмăлламасть. Нӳрĕк нумай пулнипе чечек варри ҫĕрме пултарать.



Март – октябрь уйăхĕсенче кашни вунă кун урлă фиалка чечекне минераллă удобренипе апатлантармалла. Ăна валли «Фиалочка» удобрени аван каять. Ҫурăлса пĕтнĕ хыҫҫăн типнĕ чечек тунине хуҫмалла. Унăн аял енчи пысăк ҫулҫине вăхăтран вăхăта татса илмелле. Ҫуркунне куҫарса лартсан сенполи лайăххăн аталанать. Фиалкăна ĕрчетес тесен унăн пысăк ҫулҫине нӳрĕклĕ ҫĕр ҫине тирсе лартмалла та кантăк савăтпа хупламалла. Сенполие ытлашши пысăк куршака лартма ан тăрăшăр.

Чечекĕн хăш-пĕр сорчĕ ҫутă ҫитменнипе тĕсне улăштарма пултарать. Ăна валли 12 сехет кун ҫути кирлĕ. Сортне кура фиалка ҫурăлма пуҫланă чухне пĕр тĕрлĕ, ҫурăлса пĕтнĕ чухне тепĕр тĕслĕ пулать. Ҫулҫăн хĕрри сарăхни тăпра пулăхсăр пулнине ҫирĕплетет. Йывăр тăпрана вакланă мăк ярса ҫăмăллатма пулать. Хитре ешерекен сенполи сирĕн кăмăлăра ялахах ҫĕклĕ.

**С. ШАПОШНИКОВА,**
**чечек ăсти.**

Килти хушма хуҫалăха аталантарассипе

## Ҫăмăллатнă кредитсем

Ял ҫынни килти хушма хуҫалăха аталантарасси ҫине пысăк тимлĕх уйăрать. Ҫак тĕллевпе «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ килĕшӳллĕн ҫăмăллатнă кредитсем илнипе ял ҫынни туллин усă курма тăрăшать.

Муркаш районĕнче кăҫалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче килти хушма хуҫалăхсене аталантарма ҫăмăллатнă кредитсем илесси малалла пулса пынă. Ҫак хушăра район ҫыннисем пурĕ 39 кредит илнĕ. Унăн пĕтĕмĕшле сумми 6 миллион та 616 пин тенкĕ. Вăл шутран ял ҫыннисем «Раççей ял хуҫалăх банкĕнчен» 3 миллион та 351 пин тенкĕлĕх 22 кредит илнĕ. Раççейăн Перекет банкĕ урлă асăннă пулăшупа 17 кредитор 2 миллион та 265 пин тенкĕлĕх усă курнă.

Ҫак вăхăтра килти хушма хуҫалăхсене аталантарма ҫăмăллатнă кредитсем илессипе Турай (7 кредит), Ярапайкасси (5 кредит) ял тăрăхĕсенче пурăнакансем активлăрах пулни курăнать.

«АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ĕҫлеме пуçланăранпа пирĕн районта пурăнакансем пĕтĕмпе 3090 кредит илнĕ. Укҫа ҫине куçарсан ку сумма 480,3 миллион тенкĕпе танлашать. Тепĕр майлă каласан килти хушма хуҫалăха аталантарнă ҫĕрте патшалăх пулăшăвĕпе усă куракансем – районти мĕн пур килти хушма хуҫалăхсен 23,1 проценчĕ.

**Хаçат редакцийĕ.**

# Вĕрентӳри «çĕнĕ стандартсем»

«Полици çинчен» саккун проектне йышăннă хыççăн «Вĕренӳ çинчен» саккун проектне анлăн сӳтсе явма пуçларăмăр. Нумайăшне вара проектри пĕр пай – пурин те вĕренмелли ОБЖ, физкультура, «Раççей тĕнчере» ятлă истори предметне тата вĕренекенĕн индивидуаллă проекчĕ çинчен калаканни – хумхантарать.

Проектра вĕсем обязательнăй тени шкул ачин çак предметсене кăна тарăннăн вĕренмелле тенине пĕлтермест. Ку дисциплинăсене пурте вĕренĕç. Унсăр пуçне аслă классенче пилĕк ен çине уйăрнă предметсене тĕрлĕ шайра вĕренмелле пулĕ.

– Шкулти аслă классенче профильлĕ вĕрентӳ мелĕпе ĕçлесси халĕ те пур. Унпа пĕрремĕш çул ĕçлеместпĕр. Анчах та шкулсенче 3–4-шар параллельлĕ классем пулманни чăрмантарнă. Пирĕн районта ку тĕлĕшпе Муркашри вăтам шкул тата Муркашри лицей япăх мар ĕçлесе пыраççĕ. Профильлĕ вĕрентӳ аслă классенче пырать. Мĕншĕн тесен 5–9 классенче шкул ачи тĕп пĕлӳ илет. Хыççăн вара вăл малашне хăш енĕпе аталанассине шута илсе профиль енне суйлама пултарать.

«Çĕнĕ стандартсемпе» килĕшӳллĕн аслă классенче – 10–11-мĕшсенче – вĕренекенсем саккун проектĕнче асăннă пилĕк профильлĕ енрен пĕрисене тарăннăн, теприсене, сăмахран, база шайĕнчех вĕренме пултараççĕ. Тарăннăн вĕреннĕ предметсемпе, паллах, вара патшалăх пĕрлехи экзаменĕсене те тытĕç. Маларах асăннă тăватă предмета пур шкул ачи те вĕренет. Индивидуаллă проект вара кашнин хăйĕн пулать.

«Çĕнĕ стандартсене» кăçал пĕрремĕш классенче ĕçе кĕртме пуçлаççĕ. Аслă классенче вара ку çĕнĕлĕх халех пурнăçа кĕмест. Саккун та хальлĕхе проектра, – çапла ăнлантарса пачĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова аслă классенче «çĕнĕ стандартсемпе» вĕренессипе кăсăклансан.

Саккун проектне сӳтсе явасси малалла пырать. Калаçăва пурин те хутшăнма майсем пур.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт

## Мала тухнă

Нарăс уйăхĕн 17-19-мĕшĕсенче Шупашкарта боксра спорт ăсталăхне туптама пуçланă çамрăксем хушшинче СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ М. Степанов ячĕпе уçă турнир иртрĕ. Унта пирĕн районти С.В. Черкашин аслă тренерпа РФ спорт мастерĕ С.С. Черкашин, О.А. Сютруков тренерсем ертсе пыракан 11 боксер хутшăнчĕ. Асăннă ăмăртăва хутшăннисенчен И. Налимов (30 кг), Д. Ржанов (38 кг), А. Корчагин (52 кг), Г. Балканов (32 кг), Д. Грачев (34 кг), В. Кожевников (37 кг) 1-мĕш, Н. Пигасов (30 кг) 2-мĕш, Р. Николаев (36 кг) 3-мĕш вырăнсене йышăннă.

***Мартăн 23-мĕшĕнче Муркашри тĕп библиотекăра 14 сехетре граждансене юристсем тӳлевсĕр пулăшу параççĕ.***

## Тав тăватпăр

Кашмаш ялĕнче пурăннă, хамăра çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă тата йывăрлăхра яланах пулăшнă аннене, хунямана, асаннене, ватă асаннене, кукамая, çывăх тăвана, Зоя Павловна Беловăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективне, «Сывлăх» ФСК-ра ĕçлекенсене, «Свобода» СПК-племзавод правленине, Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективне, Шупашкарти «Альфа-Агро» ООО ĕçченĕсене, ял-йышпа тăвансене чĕререн тав тăватпăр.

**Беловсемпе Павловсен çемйисем.**

Вулакан ыйтать

# «Çакăн пеккисем полицире те пулаççĕ-и?»

**«Пĕлтĕрхи декабрĕн 25-мĕшĕнче хаçатра «Йĕрке тени кирлех» ятпа пичетленнĕ статьяна вуланă хыççăн эпир те хамăрăн шухăша редакцие çырса пĕлтерес терĕмĕр. Питĕ тĕрĕс çырнă унта автор хальхи çамрăксем пирки. Çамрăксем лавкка умĕнче кăна мар, унта çитиччен кăтартма пуçлаççĕ хăйсен «паттăрлăхне». Вĕсем умĕнче утса пыратăн пулсан çул пар вĕсене. Унсăрăн: «Витĕр тухса каятăп, пăрăн!» – тесе кăшкăраççĕ. Тата тем те пĕр. Пирĕн милици ĕçченĕсем пирки те çырас килет...»**

Çапла пуçланакан çыру редакцие К. Захарова, З. Иванова тата Т. Сидорова авторсенчен килчĕ.

Малалла çырура авторсем районти шалти ĕçсен пайĕн хăш-пĕр сотрудникĕсем йĕркене пăсакансене дежурнăй чаçе мĕнле тытса кайни пирки те, хăйсем те йĕркене пĕрре мар пăсни пирки пĕлтереççĕ.

«...Çавăн пек милици ĕçченĕсем полицире те пулаççĕ-и?» – ыйтаççĕ вĕсем çыру вĕçлесе.

Çыру редакцие çитсен эпир ăна районти шалти ĕçсен пайне хурав илме ярса патăмăр. Саккунпа çирĕплетнĕ вăхăтра редакцие хурав килчĕ. Çыру авторĕсене, ытти вулакана та районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн пулăшаканĕ Л.В. Кролькова панă хуравпа паллаштаратпăр:

**«Муркаш салинче пурăнакансем çырнă тăрăх районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем хăйсене тивĕççĕр тытнă тĕлĕшпе тĕрĕслев иртрĕ. Çырура милици ĕçченĕсем профессипе этика нормисене пăснă тĕслĕхсене шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ ирттернĕ канашлура пăхса тухнă. Пай сотрудникĕсемпе Раççей Федерацийĕн шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕн профессионаллă этика кодексĕ тăрăх хушма вĕрентӳ ирттернĕ».**

# Ăнăçлă ăмăртнă

Мартăн 10-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар хулинче СССР чемпионкине С. Михеевăна халалласа йĕлтĕрçĕсен уçă ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Ярапайкассинчи уйрăмĕнче ăсталăха туптакан спортсменсем те хутшăннă. Э.А. Гордеев тренерăн воспитанникĕсем тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăмăртса хăйсене лайăх енчен кăтартнă. 3 çухрăмлă дистанцире Диана Чернова 1-мĕш, Светлана Соколова 2-мĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ, 2 çухрăмлă дистанцире Марина Андреева финишра иккĕмĕш пулнă. Унччен маларах, мартăн 4–6-мĕшĕсенче, республикăри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсен ăмăртăвне пирĕн районти спорт шкулĕн 43 воспитанникран тăракан команди те хутшăннă. Пĕтĕмĕшле кăтарту тăрăх команда 2-мĕш вырăнта. Уйрăм стартсенче Анастасия Костина (Ярапайкассинчи вăтам шкул) 3-мĕш, Анастасия Ксенофонтова (Калайкассинчи вăтам шкул) 2-мĕш, Светлана Соколова (Ярапайкассинчи вăтам шкул) 3-мĕш пулнă.




Хамăр инф.


## Полкирпича + газобетон = идеальная стена

**Театр, известно, начинается с вешалки, а строительство - с проекта. Каждый, кто загорелся желанием уже летом взяться за возведение собственного дома, наверняка ломает голову над выбором проекта. Оно и понятно, ведь от этого зависит не только архитектурная привлекательность здания, но и себестоимость строительства.**

Между тем специалисты ТК «Терминал» советуют: не стоит изобретать велосипед, нет смысла рисовать собственные проекты с излишним запасом прочности бетона и кирпича - это ненужные затраты. Даже испытанные веками деревенские проекты наших отцов и дедов сегодня оказываются не самыми дешевыми. Поэтому **проще получить уже готовый проект. Предложите свои идеи специалистам торгового комплекса, они учтут все ваши пожелания - и на мониторе компьютера увидите свою мечту.** Кстати, в архиве «Терминала» - 1800 готовых проектов, предоставляемых клиентам бесплатно.

**Удачный выбор технологии строительства также здорово помогает экономить средства.** Во-первых, технологии строительства многоквартирных зданий и индивидуальных домов - разные вещи, применимые в одном непригодны в другом. К примеру, рыть огромный котлован под фундамент собственного дома и сооружать мощные опалубки необязательно - можно использовать естественный грунт, и фундамент будет готов всего за 1 день. Удивитесь, но и **фундамент толщиной 60 см - лишний, достаточно и 40 см.** И еще: использование оконных и бетонных перемычек - уже в прошлом, это дорого и некрасиво, есть современные решения, например, более дешевые и практичные перекрытия. И все же главный выбор - из чего строить стены? Материалов много: дерево, кирпич, газобетон (газосиликат), арболит, бетон (керам-зитобетон, пенобетон), полистирол-бетон, пенопласт, стекловолокнистые утеплители, сайдинг и т. д. - **что** предпочтительнее? **Экологичность, теплостойкость, пожаробезобасность, прочность, цена - выбор должен основываться на оптимальном сочетании всех этих критериев.** Скажем, дерево отвечает самым строгим требованиям экологии. Плюс - тепло. Но помимо пожароопасности строительство только из этого материала сегодня обойдется очень дорого. Последнее относится и к кирпичу.

**Использование достоинств разных материалов - полкирпича облицовки и газобетон - это и есть идеальная стена.** Высокая экологичность, теплостойкость материалов (уступают только дереву), пожаробезопасность и низкая стоимость строительства (стена тоньше, нагрузка на фундамент меньше, материалы дешевле, стены не требуют внутренней штукатурки и т. д.) - получаем то, о чем мечтали.

**Ждем вас в ТК „Терминал», который предлагает огромный выбор кирпича и газобетона: г. Чебоксары, Канашское шоссе, д. 7/1, Альгешево, Торговый комплекс «Терминал».Т.: 30-55-10,30-55-15.**
**www.terminaltk.ru.**


В Москву и Московскую обл. требуются:фасовщицы-упаковщицы,грузчики(кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-4.

**Ювелирная мастерская: ремонт и изготовление ювелирных изделий, лазерная гравировка изделий, скупка лома и старинных монет. Адрес: с. Моргауши, Дом быта. Тел.: 8-927-66-88-501. 5-5.**

**Продается сено в тюках, в неограниченном количестве, с доставкой. Сено местное, непривозное, высокого качества.**
**Тел.: 8-906-384-48-30. Сергей. Тел.: 8-927-990-39-08. Вася. 2-.5.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 1-7.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаем сено, солому в тюках, с доставкой.**
**Тел.: 8-960-307-41-78. 4-5.**

**Комбикорма, отруби, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89279920519. 2-5.**

* * *

**Проекты домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 3-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 3-9.**

* * *

**Куплю старый дом в любой деревне, до 50 тыс. рублей. Тел.: 38-75-44. 2-3.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тынашки, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-342-39-43. 2-5.**

* * *

**Бурение скважин на воду, установка, монтаж, доставка колец диаметром 1 м. Тел.: 8-903-066-76-49; 8-906-385-44-75. 1-5.**

* * *

**Всего за 5–10 мин. мы сделаем из вашей старой подушки новую (дезинфекция, удаление мусора, пыли, замена наперника). Пенсионерам и инвалидам скидка 5%. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 («Агропромснаб»). Тел.: 8-961-338-97-30.**

* * *

**Продаю квартиру в Моргаушах по ул. Ленина, 56 кв. м., 3 этаж. Цена договорная. Тел.: 8-919-670-58-23. 2-2.**

* * *

**Хура тĕслĕ 5 пăруланă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-857-76-33.**

* * *

**Продается дом под снос с земельным участком 35,5 соток в д. Сятракасы, ул. Победы; асфальт, газ у дома, плодоносящий сад. Тел.: 8-905-710-59-99; 8-964-567-14-47.**

* * *

**Халăхран хаклă хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн е чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 89196719626. 5-10.**

* * *

**Продаем сено. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 2-2.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.**

* * *

**В д. Юнгапоси на территории МСО «Моргаушская» открылся магазин«СЕЛЬХОЗЗАПЧАСТИ». Тел.: 89603048267. 3-9.**

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши, с индивидуальным отоплением, 2 этаж трехэтажного дома. Тел.: 89176554994. 2-2.**

* * *

**Продаю домашнее сено. Тел.: 8-919-672-15-55.**

* * *

**Спутниковое ТВ. Установка в короткие сроки. Качество, гарантия, обслуживание. Тел.: 89278527475. 1-2.**

* * *

**Марпосадский гвоздильный завод реализует гвозди от 16 до 225 мм от 35 руб. за 1 кг. Тел.факс (83542)2-24-70.**

* * *

**ТЦ «Лотос» продает: трубы для ограды, профнастил, сетку- «рабицу», профили, мет. двери и ворота, банные печи, мотоблоки, косилки. Изготовление, доставка, установка. Тел.: 8-9176652726. 2-5.**

* * *

**Кредитному потребительскому кооперативу требуется кредитный специалист для работы в отделении в с. Моргауши. Требования – высшее экономическое образование, опыт работы по специальности, возраст до 40 лет, знание экономики района и его жителей, знание бухучета, коммуникабельность, ответственность, уверенный пользователь ПК (Word, Excel, Internet). Резюме отправлять по адресу: sodrugestvo21@mail.ru. Возьмем в аренду офисное помещение в центре с.Моргауши площадью до 20 кв.м. Контактный телефон 8-952-029-38-69. 1-6.**


Юлташĕсем, ĕçтешĕсем «Дружба» хуçалăхра экономистра ĕçленĕ тата обществăлла ĕçре пĕтĕм вăйне хурса тимленĕ

**Юлия Андреевна**
**ПАРГЕЕВА**

чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта директор çумĕ пулса ĕçлекен, географипе истори предмечĕсене вĕрентекен Н.В. Обручникован

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Сосновкăри тĕп шкул коллективĕ кунта физика учителĕнче ĕçлекен С.С. Максимован

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн, тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

### Прогноз погоды с 19 по 25 марта 2011 года

www.yandex.ru

| сб 19 | вс 20 | пн 21 марта | вт 22 | ср 23 | чт 24 | пт 25 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно с прояснениями, небольшой снег | облачно, небольшой снег | переменная облачность | переменная облачность | облачно с прояснениями | облачно | облачно |
| 0 | 0 | +1 | +1 | +1 | +2 | +1 |
| –3 | –6 | –6 | –5 | –3 | –4 | –4 |


**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 8- 50.**



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 18.03.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4329.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.